## Ялти сумлă ĕçченсем

# Тăрăшулăхне кура – хисепĕ

Алла диплом илсен, мана Сосновкăри 8 çул вĕренмелли шкула математика учителĕ пулса ĕçлеме ячĕç. Ĕçе вырнаçсан çамрăк специалист умне нумай йывăрлăх тухса тăрать. Анчах та вĕсене çĕнтерме, специальноçе алла илме мана шкул коллективĕ, шкул директорĕ Г.П. Платонов, унăн çумĕ Т.С. Ипатьева тата уйрăммăнах математика учителĕ Лариса Нестеровна Ильина нумай пулăшрĕç.

Ун чухне Лариса Нестеровна пиллĕкмĕш çул кăна ĕçлетчĕ пулин те, пуян опыт пухма ĕлкĕрнĕччĕ. Шкулти математика, физика, хими предмечĕсен пĕрлешĕвне ертсе пыратчĕ, паянхи кунччĕнех вăл çак тивĕçе пурнăçласа хăй чăннипех “аслă учитель” пулнине кăтартса пачĕ, мĕншĕн тесен вăл уроксене итленĕ хыççăн кирлĕ сĕнӳсемпе пулăшса пычĕ. Унтанпа кĕçех вăтăр çул çитет ĕнтĕ, çав вăхăтра маншăн вăл наставник кăна мар, çывăх юлташ та, тăван аппа та пулса тăчĕ.

Чăннипех те тĕлĕнмелле, çав вăхăтрах мухтава тивĕçлĕ çын вăл Лариса Нестеровна “Ыр çын пуласси ачаран паллă”, - теççĕ те, шкулта вĕреннĕ чухнех вăл пур предмета та тарăн пĕлнипе юлташĕсене тата учительсене тĕлĕнтерсе тăратчĕ, районти тата республикăри олимпиадăсене хутшăнса лайăх вырăнсем çĕнсе илетчĕ (Эпĕ Лариса Нестеровнăна шкултанах пĕлетĕп, мĕншĕн тесен пире шăпа пĕр шкултах вĕренме, кайран пĕр шкултах ĕçлеме пӳрнĕ). Унпа кăна çырлахмарĕ вăл, спортпа туслă пулса шкулти тата районти ăмăртусене хутшăнчĕ, класра уйăхсерен тухакан стена хаçатне илемлетрĕ, концертсенче унăн уçă сасси янăрарĕ. Апла пулин те вăл хăйне нихăçан та мăнна хуман, юлташĕсене яланах пулăшса пычĕ, çавăнпа та ăна юлташĕсем хисеплетчĕç - çак хура куçлă, çӳçне пилĕке çити çивĕтленĕ тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ хĕр ача пурин кăмăлне те каятчĕ, шкулта вĕрентекен учительсенчен нумайăшĕ хĕр ачана хăйĕн предмечĕпе пĕлĕвне малалла тăсма сĕнчĕ, анчах вăл математика учителĕ Т.Н. Вязова хавхалантарса пынипе математика учителĕн профессине суйласа илчĕ. Чуманкассинчи вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтерсе И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне физикăпа математика факультетне вĕренме кĕчĕ. Тепĕр 5 çултан Сосновкăри 8 çул вĕренмелли шкулта ĕçлеме тытăнчĕ, паянхи кунччĕнех Лариса Нестеровна шкулта математика предметне вĕрентет, ачасене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшать.

Математика предметне вĕрентнипе пĕрлех “Тăван ен культури”, ӳнер ăсталăхĕн урокĕсене юратса вĕрентет, вĕрентекенĕн анлă тавракурăмĕ çак уроксенче тăван тавралăх илемĕпе, аваллăх




культурипе паллашма пулăшать. Тăрăшни сая каймасть, 2001 çулта Лариса Нестеровнан 9 – мĕш класс вĕренекенĕ Лида Максимова чăвашсем вырăссемпе пĕрлешни 450 çул çитнĕ ятпа ирттернĕ “Манăн несĕлсем” конкурсра районта та, республикăра та пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Уроксене ирттернипех Лариса Нестеровнан ĕç кунĕ пĕтмест, ачасемпе тĕрлĕ мероприятисене хатĕрленет, шкулта час-часах ӳкерчĕксен, ал ĕçĕсен куравне йĕркелет, районта ирттерекен ӳкерчĕксен куравĕсенче унăн вĕренекенĕсем хастар хутшăнаççĕ. 2006 çулхи январь уйăхĕнче 5-мĕш класра вĕренекен Ирина Белова пушара хирĕç ирттернĕ ӳкерчĕксен конкурсĕнче 3-мĕш вырăн йышăнчĕ. Ял хуçалăх перепиçне халалланă ӳкерчĕксен выставкинче Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти вĕренекенсен ӳкерчĕкĕсем те пулчĕç. 2006 çулта районти вĕрентӳ тата çамрăксен пайĕ йĕркеленĕ “Таса пул” конкурсра унăн вĕренекенĕсен ӳкерчĕкĕсем 1-мĕш вырăн йышăнчĕç.

Л.Н. Ильина наукăпа тĕпчев ĕçне активлă хутшăнать. Чăваш культурине аталантарассишĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн 1997 çулхи октябрĕн 22-25-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн форумне делегат пулса хутшăнма тивĕç пулчĕ. 2001 çулта “Пирĕн вĕрентекен” радиопередачăра интервью пачĕ. 2003 çулта Чăваш телевиденийĕ йĕркеленĕ О.Г. Кульевăн тăван ен культурине вĕрентмелли пĕрремĕш кĕнекине тишкерме хутшăнчĕ. 2004 çулта “Муркаш районĕ. Йăла-йĕркесем, уявсем” кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Çак кĕнекене пуянлатма Л.Н. Ильина нумай материал пухса пачĕ. Муркаш районĕ 60 çул тултарнине халалланă “Вĕсемпе район мухтанать” районăн мухтава тивĕç çыннисем хушшинчи тĕл пулăвĕнче пулчĕ. 2004 çулта районти наукăпа практика конференцине унăн вĕренекенĕ Алексей Степанов хутшăнса Тав çырăвĕ илме тивĕç пулчĕ. 2006 çулта районта ирттернĕ “Музей тата ачасем” конкурсра 8-мĕш класра вĕренекен Наташа Петровапа Таисия Тимофеева 2- мĕш вырăн йышăнчĕç. Уйкас Янасал ял советне кĕрекен ялсенчи хĕрарăмсен канашне ертсе пынă, Культура çуртĕнче вăл кашни çул хĕрарăмсен ал ĕç, тутлă апат-çимĕç выставкине йĕркелетчĕ, тĕрлĕрен конкурссем йĕркелесе художество номерĕсемпе пуянлататчĕ. Фермăсенче пулса хĕрарăмсен ĕç условийĕсемпе интереслеHетчĕ, çитменлĕхсене пĕтерме хуçалăх ертӳçисемпе тĕл пулса калаçатчĕ, нумай ачаллă, “йывăр” çемьесенчи ларутăрупа кăсăкланатчĕ.

Пурнăç никамăн та пĕр тикĕс килмест, вĕл пирĕн ума нумай кĕтменлĕх, тĕрлĕрен пăтăрмах кăларса тăратать. Хăшĕ çакăн пек чух ĕçке ярăнать, айăпа айăпсăрри çине йăвантарать, çынпа хирĕçет, хăй çине алă хуни те пулать, Лариса Нестеровна вара юрласа ярать, савăнмалли пулсан та юрлать, кулянмалли пулсан та, çапла майпа кăмăлне уçать, “Пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме, телее тупма эпĕ хам çине ытларах шанатăп”, -тет вăл. Вĕрентекен вăхăт тупса ялти Культура çурчĕ çумĕнчи фольклор ансамбльне хутшăнать, унăн шăпчăк евĕр сассине миçе çын итлесе савăннă пуль.

Лариса Нестеровна мăшăрĕпе Геннадий Владимировичпа икĕ ача пăхса ӳстерсе ура çине тăратрĕ. Ывăлĕ Вадим - килте ашшĕ-амăшĕн тĕрекĕ, хĕрĕ Оксана медучилище пĕтернĕ хыççăн Шупашкарта республикăри кардиологи диспансерĕнче ĕçлет, çемьеллĕ. Сакăр уйăхри мăнукĕ пурне те хăйĕн йăл куллине парнелет.

Тăрăшулăхне кура – хисеп. Вĕрентекене 1985 çулта Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствин Хисеп грамотипе, нумай çул хушши Муркаш районĕнчи хĕрарăмсем, çемье, ачасем хушшинче ырă кăмăлпа ĕçленĕшĕн 1995 çулта Чăваш Республикинчи хĕрарăмсен канашĕн Хисеп грамотипе, 1999 çулта шкулти вăл ертсе пыракан драма коллективĕ пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн районти вĕрентӳ пайĕн грамотипе чысланă. 2002 çулта вăл Муркаш район администрацийĕпе вĕрентӳ пайĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ.

Февралĕн 17-мĕшĕнче Л.Н. Ильина **(сăн ӳкерчĕкре)** хăйĕн 55 çулхи юбилейне паллă турĕ. Кашни çулах ăна çак кун çĕршывĕпех саланнă вĕренекенĕсем саламлаççĕ, кăçал та вăл нумай-нумай саламлă телеграммăсем, тав сăмахĕсем илчĕ. Эпир те, шкулта вĕрентекенсем тата вĕренекенсем, Лариса Нестеровнăна ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç çулĕ такăр, сывлăхăр çирĕп пултăр!

**З. АНТОНОВА,**
**Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти математикăна вĕрентекенĕ.**

## Ырă ята тивĕç

# 25 çул библиотекăра



**Зоя Ивановна Иванова Чуманкассинчи тĕслĕх библиотекăра 25 çул хушши вăй хурать. Малтан ахаль библиотека пулнă пулсан, халĕ вăл çĕнĕ мелпе ĕçлет. Хаçат-журнал, кĕнеке вулама, тĕрлĕ информаци илме килекенсен йышĕ пысăк. Зоя Ивановна вара вĕсене яланах хапăл туса кĕтсе илет, май пур таран пулăшма тăрăшать. Ырă кăмăлĕшĕн вăл ял-йыш умĕнче пысăк хисепре. Апла пулсан çамрăк ăрăвăн унтан тĕслĕх илмелли пурах.**

## Манăн анне

# Пуçламăш классене вĕрентет

Кашни çыннăн çĕр çинче чи çывăх та ырă çын – анне. Йывăр вăхăтра та чи малтан анне патне чупатпăр. Чи ыррине те анненех каласа паратпăр. Пĕрремĕш сăмах та пирĕн “анне” сăмахран пуçланать.

Манăн анне Ангелина Иосифовна Белова. Вăл хăйсен ял каччипе пĕрлешсе çемье çавăрнă. Эпир унăн икĕ хĕрĕ.

Манăн анне шкулта çирĕм çул пуçламăш класс учительници пулса ĕçлет. Манăн анне чи пултаруллă та юратнă учитель тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен аннене хăй вĕрентнĕ ачисем кашни уявпах саламлаççĕ.

Вăл чи малтанах Якаткасси филиалне кĕрекен Çуткӳл ялĕнчи шкулта вăл виçĕ çул пĕчченех темиçе класспах ĕçленĕ. Ун хыççăн Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта ĕçлеме тытăннă. Вăл вĕрентекен ачасем яланах лайăххисен шутĕнче. Анне вĕрентнĕ ачасем аслă вĕренӳ заведенийĕсенчен те вĕренсе тухрĕç. Нумайăшĕ ĕçлет те ĕнтĕ. Халĕ шкулта тăххăрмĕш тата пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем те аннен ачисем. Вăл кăçал пĕрремĕш класс ачисене вĕрентет. Унăн класĕнче вун пĕр ача. Тăххăрмĕшсем нумай олимпиадăсенче япăх мар результатсем кăтартрĕç. Вăл вĕрентнĕ Константин Михайлов пĕлтĕр республикăна интеллектуаллă вăййа тухма пултарчĕ. Унта та вăл япăх мар результат кăтартрĕ.

Анне хăйĕн шкулти ачисемшĕн чунне пама хатĕр. Вĕсем пурте ырă çынсем пулса ӳсчĕр тесе тăрăшать. Хăйĕн ачисем пекех шутлать. “Эсир иксĕр кăна мар, манăн тата миçе ача”, – тет. Киле килсен те вăл шкул çинченех шутлать. Япăхрах вĕренекенсем пулсан, вĕсемшĕн кулянать. Вăл е ку ача мĕн те пулин ыррине тунă пулсан, хавхаланса каласа парать. Вăл хăй вĕрентекен ачасемпе тĕрлĕрен мероприятисем ирттерме тăрăшать. Тарăнрах пĕлӳ парас тесе, хăйĕн пĕлĕвне те ӳстерсех тăрать. Эпĕ хамăн аннене питĕ юрататăп. Ăна унăн шкулти ачисем те эпĕ юратнă пек юратчăр.

Хамăн юратнă аннене Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе пĕтĕм чĕререн тухакан ăшă сăмахпа саламлатăп.

**Ирина БЕЛОВА.**
Исетеркке ялĕ.

## Район 63 çул тултарчĕ

# Ĕçре те маттур, уявра та сатур

***(Район кунне халалланă савăнăçлă пухуран)***



**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Уяв программи ачасен Муркашри искусство шкулĕнче вĕренекенсем кăтартнă хореографи композицийĕпе пуçланчĕ.

Сцена çинче – район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, ĕç коллективĕсен представителĕсем, хăнасем. Хăйĕн сăмахĕнче район пуçлăхĕ Юрий Александрович районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕн иртнĕ çулхи итогĕсене пĕтĕмлетрĕ, кăçал умра тăракан задачăсем çинче чарăнчĕ.

Епле уяв-ха вăл мала тухнисене, ырă ята тивĕçнисене саламласа чысламасăр, парнесем памасăр? Экономика ăмăртăвĕнче мала тухнисене ял хуçалăх, промышленность предприятийĕсем, ял тăрăхĕсем хушшинче палăртрĕç, дипломсемпе парнесем пачĕç. Уйрăм ĕçченсенчен хастар ĕçпе ырă ята тивĕçнисем тĕрлĕ отрасль тăрăх Раççей Федерацийĕ шайĕнчи Хисеп грамотисемпе кăкăр çине çакмалли знаксене, Чăваш Республикин Министерствисен, Чăвашпотребсоюзăн Хисеп грамотисене тивĕçрĕç.

Тухса калаçакансем, Муркашсене район кунĕ ячĕпе саламлакансем чылайăн пулчĕç. Вĕсен шутĕнче республика экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ И.Б. Моторин, ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ С.А. Енилина, Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕн ертӳçи А.И. Федотов, Ильич яч. хис. хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева, Москакасси шкулĕн пуçламăш




классен учительници С.Ф. Желтова, Етĕрне районĕн пуçлăхĕ Е.М. Яранский, Çармăс Республикин Горномарийски районĕн представителĕ А.П. Альмяшкин, Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕн çумĕ Н.И. Наумова, «Хыпар» издательство çурчĕ» патшалăх унитарлă предприятийĕн директорĕн-тĕп редакторĕн çумĕ Г.А. Максимов, «Россельхозбанк» уçă акционер обществин филиалĕн кредитсем парас енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ А.В. Веденин.

Уяв концерт программипе пуян пулчĕ. Савăнăçлă уява пухăннисене районти художество пултарулăх ушкăнĕсемпе пĕрлех профессиллĕ артистсем те хăйсен юрри-ташшипе савăк кăмăл-туйăм парнелерĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**





**Сăн ӳкерчĕксенче: сцена çинче район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, ĕçре палăрнисем, хăнасем; Ильич яч. хис. хуçалăх водителĕ Ю.Ф. Мадиков РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ; “Сундырь-Хлеб” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн “Лидер” магазинĕнче ĕçлекен Галина Игнатьева сутуçăпа Алевтина Щербакова заведующие тата обществăра технолог пулса 15 çул вăй хуракан Наталья Шумилинана район кунне уявлама пынисене продукци реализациленĕ вăхăтра куратăр; фойере вĕрсе каламалли инструментсен ансамблĕ кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шăрантарчĕ.**